Çуллахи сезон хупăнчĕ

# Район хаçачĕн парнисем – тивĕçлисенче

(Вĕçĕ. пуçл. 1-мĕш стр.).

Шкул ачисене тата вĕсен вĕрентекенĕсене «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн тĕп редакторĕ А.И. Тихонов саламласа ăнăçусем сунчĕ. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З.Ю. Дипломатова çамрăк спортсменсене ăнăçлă стартпа финиша хăвăрт çитме суннипе пĕрлех учительсене вĕсен професси уявĕ ячĕпе те саламларĕç. Кăçалхи ăмăртура учительсем те вăй виçме пулчĕç-çке.





Тойкилтĕ шкулĕ DVD-плеер та, картина та çĕнсе илчĕ.



Иккĕмĕш вырăна тухнă Йӳçкасси шкулĕн команди çитес çул çĕнтерӳçĕ пуласса шантарчĕ.

Ăмăртăвăн тĕп судйи В. Петров эстафетăсен йĕркипе паллаштарнă хыççăн старта чи малтан тĕп шкулсенче вĕренекен 1995-1996 çулсенче çуралнă хĕр ачасемпе арçын ачасем тухрĕç. Кашни ачашăнах пĕршер километр чупса тухасси мар, хăйĕн командине малтан та мала илсе пырасси йывăртарах пулчĕ пулĕ. Кашни тапхăрта чупакансенех тренерсем кирлĕ сĕнӳсем пама ĕлкĕрчĕç, хăйсен вĕренекенĕсемшĕн çунни хăшĕ-пĕрисенче уйрăмах вăйлă сисĕнчĕ. Результатшăн тăрăшрĕç пурте.

Анчах та çĕнтерӳçĕ кашни ăмăртурах пĕрре çеç-çке. Шăмат кун вара пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем хушшинче Тойкилтĕсене çитекенни пулмарĕ, çак шкулти темиçе вăйлă спортсмен вăл кун Сĕнтĕрвăрри районĕнче иртнĕ ăмăртăва тухса кайнă пулин те. Иккĕмĕш вырăна Кашмаш шкулĕн команди тухма пултарчĕ, виççĕмĕшсем Шетмĕпуçсем пулчĕç.

Вĕсен пăшăрханăвĕсем хыçа юлчĕç, старта вара вăтам шкулсенче вĕренекен çак ӳсĕмри хĕр ачасемпе арçын ачасем тухрĕç. Вĕсем те çав дистанциех чупса хăйсен шкулĕсенче спорта аталантарасси мĕнлерех шайра пулнине кăтартрĕç. Çапла Çатракассинчи (1-мĕш), Йӳçкассинчи (2-мĕш) тата Калайкассинчи (3-мĕш) вăтам шкулсенче вĕрентекенсем ачасене спортпа интереслентерме пултарни курăнчĕ. Шăпах çаксем призерсем пулса тăчĕç те хăйсен ӳсĕмĕнче.



Çатракасси шкулĕ çăмăл атлетика сезонне çĕнтерӳпе вĕçлерĕ.

Малалла вара старта вăтам шкулсенчи аслă ушкăна кĕрекен командăсем тухма хатĕрленчĕç. Ку ӳсĕмĕн фаворичĕсем ытти ăмăртусен кăтартăвĕсем тăрăх паллăччĕ те ĕнтĕ. Анчах кашни ăмăртурах пĕр килмест-ха тесе яшсемпе хĕрсен командисем ăмăртнине сăнама интереслĕ пулчĕ. Калайкассинчи вăтам шкул командине çитекенни вара пурпĕр пулмарĕ. Ярапайкассисем те дистанцие призерсем шутĕнче вĕçлерĕç – 2-мĕш вырăна тухрĕç. Муркаш лицейĕн команди 3-мĕш пулчĕ.

Шкул ачисен эстафети вĕçленчĕ. Призерсем илемлĕ те хаклă парнесене халь тесен халĕ илме хатĕрччĕ ĕнтĕ. Учительсен командисем ăмăртни вара пурне те тыткăнлама пултарчĕ. Ултă команда старта тухрĕ. Çамрăк учительсем те, аслăраххисем те эстафетăна хутшăнса кăмăлĕсене хăпартрĕç. Ачасен умĕнче те хăйсен чысне ӳкермерĕç вĕсем. Кĕрешӳ хĕрӳ пулчĕ. Чуманкассинчи вăтам шкулта ĕçлекен учительсем мала тухса хăйсене уяв парни тума пултарчĕçех. Вĕсем хыççăн финиша Тойкилтĕ шкулĕн команди çитрĕ. Виççĕмĕшсем Шурчасем пулчĕç.

Хаçат редакцийĕ хаклă парнесем хатĕрленĕ: 1-мĕш вырăна тухнисем валли – DVD-плеерсем; 2-мĕш вырăна тухнисем валли – илемлĕ пысăк картинăсем, 3-мĕш вырăна тухнисем валли – хаклă чей сервизĕсем.

Çак парнесене çĕнтерӳçĕсем кăмăлласах йышăнчĕç. Картинăсем хыçне вара кашниех хаçатăн тĕп редакторне А.И. Тихонова, район пуçлăхне Ю.А. Иванова тата район администрацийĕн пай пуçлăхĕсене асăнмалăх автограф лартма тата ырă халалсем çырма ыйтрĕç.

Ăмăртăва хутшăннă чи кĕçĕн спортсмена вара – Ярапайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен Инна Сорокинана «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕ парне парса хавхалантарчĕ. Çавăн пекех политканаш членĕсем Мăн Сĕнтĕр шкулне ачасене спорта явăçтарса сывă пурнăç йĕркине тытма пулăшнăшăн диплом парса чысларĕç. В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавательне И. Смирнова та çамрăксене вĕрентес тата воспитани парас ĕçри ӳсĕмсемшĕн Тав çырăвĕ пачĕç.

Ăмăртăва çӳллĕ шайра ирттерме пулăшнăшăн хаçат редакцийĕ район администрацине, пай пуçлăхĕсене, уйрăмах вĕрентӳ пайĕпе судьясен коллегине тав тăвать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Спорт хыпарĕсем

## Тойкилтĕсем – призерсем шутĕнче

Иртнĕ шăмат кун, октябрĕн 3-мĕшĕнче, Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта вĕренекенсем Сĕнтĕрвăрри районĕнче Е. Николаева паллă спортсменка ячĕпе иртнĕ ăмăртăва хутшăнчĕç. Октябрьски салине хăвăрт утас енĕпе ăсталăх пухакан спортсменсем республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен пухăннă.

Аверкий Васильевич Васильев тренерăн вĕрентекенĕсем вара призерсем хушшине кĕме пултарнă. 1 км дистанцире хăвăрт утса уйрăм ушкăнсенче Роман Юсупов 1-мĕш вырăн, Григорий Иванов 2-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Аслисен ушкăнĕнче 3 км хăвăрт утассипе Роман Емельянов 3-мĕш вырăна тухма пултарнă.

Çав кунах «Çĕнтерӳ ялавĕ» район хаçачĕн парнисене çĕнсе илессишĕн иртнĕ ăмăртура та Тойкилтĕсем тĕп шкулсен командисенчен 1-мĕш пулни питĕ савăнтарать. Малалла та ăнăçусем сунатпăр çамрăк спортсменсемпе вĕсен тренерне.

**Л. СЕРГЕЕВА, Тойкилтĕ шкулĕн вĕрентекенĕ.**

**Продается однокомнатная квартира в с. Моргауши по ул. Парковая. Сдается под офис помещение, возможен вариант продажи. Контактный тел.: 62-1-93. 3-3.**

***Октябрĕн 16-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче пирĕн яланхи хăна – чăвашсен паллă эстрада юрăçи – Владимир Леонтьев концерт сезонне уçать. Унпа пĕрле программăра Чăваш халăх артистки Людмила Семенова, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Лариса Васильева, Валерий Дмитриев.***

***Концерт 18 сехет те 30 минутра пуçланать. Билет хакĕ – 100 тенкĕ. Ыйтса пĕлмелли тел.: 62-6-30.***



# Спорт афиши

**Октябрĕн 10-мĕшĕнче Тыр-пул уявĕ ячĕпе** ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен, учреждениесен тата ял тăрăхĕсен коллективĕсем хушшинче мини-футболла выляса мала тухассишĕн ăмăртусем пуласçĕ. Командăра 10 участник тата 1 представитель пулмалла. Ăмăртусем 10 сехетре Спорт çурчĕ умĕнчи лаптăкра пуçланаççĕ.

**Октябрĕн 10-мĕшĕнче ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе** ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен, учреждениесен тата ял тăрăхĕсен коллективĕсем хушшинче кире пуканĕ çĕклессипе мала тухассишĕн ăмăртусем иртесçĕ. Командăра 5 участник тата 1 представитель пулмалла. 70, 75, 80 тата 80 кг ытларах виçесенче ăмăртаççĕ. Çĕнтерӳçĕсене командăсем тата уйрăм спортсменсем хушшинче палăртаççĕ. Ăмăртусем 10 сехетре Спорт çурчĕ умĕнчи лаптăкра пуçланаççĕ.

**Октябрĕн 11-мĕшĕнче Б.И. Павлова асăнса** Тивĕшре ветерансен командисем хушшинче мини-футбол енĕпе ăмăрту иртет. 9 сехетре пуçланать.

Редакци почтинчен

## Тав тăватпăр

Чуманкасси ялĕнче пурăннă юратнă ывăла, аттене, мăшăра, шăллăма – Владимир Витальевич Димитриева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тата çак çухатăва пирĕнпе пĕрле пайланăшăн пĕтĕм тăвансене, кӳршĕсене, ял-йыша тав тăватпăр. **Димитриевсен çемйи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Участница долевой собственности Александрова Елена Михайловна, 23.11.1970 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, Московский проспект, дом 43, кв. 422, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции..**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**

**2. Александровой Елене Михайловне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, Московский проспект, дом 43, кв. 422.**

**Участник долевой собственности Александров Александр Евгеньевич, 20.07.1968 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, Московский проспект, дом 43, кв. 422, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции..**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**

**2. Александрову Александру Евгеньевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, Московский проспект, дом 43, кв. 422.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:092701:735, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:092701, для ведения личного подсобного хозяйства площадью 5481 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды:**

**- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271201:63, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Актай, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:271201, для ведения личного подсобного хозяйства площадью 5990 кв. м.;**

**- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271201:58, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Актай, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:271201, для ведения личного подсобного хозяйства площадью 6005 кв. м.;**

**- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271201:59, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Актай, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:271201, для ведения личного подсобного хозяйства площадью 6000 кв. м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.**

**12 октября с 9-00 до 18-00 часов в ДК Большой Сундырь состоится распродажа зимней обуви. Любая пара – 600 рублей. В продаже комплекты постельного белья по 350 руб.**

**Ялта пурăнмалли çурт туянатăп. Тел.: 8-919-675-75-17.**




**Предприниматель Еропанов Н.В. продает компьютеры по оптовым ценам. Предоставляет льготный кредит по Президентской программе «Компьютер - в каждый дом». Устанавливает спутниковые антенны «Триколор». Тел.: 62930, 89196515333, 89176519222 рядом с санэпидстанцией. 1-3.**

**Блоки керамзитобетонные 20x20x40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 30-40.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

**Юридическая консультация ИП Иванова Е.Ю. оказывает следующие услуги: консультирование, составление документов, представление интересов в судах, представление интересов в гос. органах, помощь в сборе документов.**

**Прием ведется в административном здании МУП «Моргаушскагропромснаб» по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 25 с 8.00 до 17.00 часов. Тел.: 62-1-84, 8-927-854-63-03.**

**Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши. Тел.:8-937-371-31-21.**

Мăн Хураçкари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта физика тата математика вĕрентекенĕн В.В. Гурьеван ашшĕ

**Валентин Андреевич ПИКУШКИН**

вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 06.10.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3800.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.